Ял хуçалăхĕнче

# Çамрăксене ĕçлеме ялта та майсем пур

Хальхи вăхăтра çамрăксем хуласенче вĕренсе пĕтернĕ хыççăн яла таврăнасшăн мар. Ку пурне те паллă. Сăлтавĕсем вара тĕрлĕрен. Çамрăксене хула пурнăçĕ илĕртет, хăшĕ-пĕри ача чухнех пылчăкпа «тăраннă»...

Ял хуçалăх специальноçĕсене алла илнисем те çакна шутвара паллашу.

«Герой» хуçалăх ертӳçи Р.Н. Тимофеев студентсене малтанах машинăпа трактор паркне çитсе курма сĕнчĕ. Юлашки çулсенче туяннă çĕнĕ техникăпа паллаштарчĕ. Каччăсем ХТЗ 17221 тракторпа, ака-суха ирттермелли агрегатсемпе интересленчĕç. Хăшĕсем ана





тавра пулчĕ. Вăрлăха хатĕрленинчен пуçласа ăна кам туянни таранах пĕлчĕç пулас специалистсем. Кунти лаборатори ертӳçи М. Романова тата хуçалăхри çамрăк агроном И. Никитин студентсене çĕр улми вăрлăхĕ епле упраннипе, ăна мĕнле суйласа илнипе паллаштарчĕç.

Тĕттĕм хранилищĕсенчен тухнă чух хĕвел те пăхкалама пуçларĕ. Студентсен ушкăнĕ вара малалла çул тытрĕ.

Ильич яч.хис. хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев çамрăксене ĕне ĕçлеме пуçлассине пĕлтерчĕ. Нумай сĕт паракан, пысăк репродукциллĕ ĕнесене ĕрчетни тухăçлă пулнине ăнлантарса пачĕ.

Курмалли, шухăшласа пăхмалли нумай пулчĕ студентсен. Ун хыççăн район пуçлăхĕпе тĕл пулчĕç çамрăксем. Ю.А. Иванов патшалăх паракан субсидисемпе кредитсем çинче чарăнса тăчĕ. Ял хуçалăхĕ паян илĕртӳллĕ отрасль пулнине палăртрĕ.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрикине ертсе пыракан Н.Г. Ванеркин та ыранхи специалистсене ăслă шухăш сахал мар пĕлтерчĕ. Çавăнпа та фабрикăна ĕçлеме пырас текен ветеринар та тупăнчĕ студентсем хушшинче.

Юрий Александрович вара яшсемпе хĕрсене района таврăнса ĕçлеме сĕнчĕ. Килте стенасем те пулăшнине тепĕр хут аса илтерчĕ.

Çак тĕл пулу хыççăн çамрăксен пĕр пайĕ те пулин яла таврăнасса питĕ шанас килет. Çăмăлли ниçта та çук вĕт.



ласах малалла каясшăн-ши? Ял хуçалăх тени вăл ялпах çыхăннă ĕнтĕ. Тен, паян вăй илсе пыракан ялсемпе хуçалăхсем пирки вĕренекен çамрăксем сахалрах пĕлеççĕ?

Çак ыйтусем çине хурав шыраса мартăн улттăмĕшĕнче пирĕн районта Чăваш Патшалăх ял хуçалăх академийĕнче вĕренекенсем килсе çитрĕç. Студентсен ушкăнне инженери факультечĕн деканĕ, пирĕн ентеш Е.А. Максимов ертсе пычĕ. Пулас специалистсем, пурте Муркаш районĕнче çуралнăскерсемех, тĕрлĕ факультетсенчен вĕренсе тухаççĕ кăçал.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçин çумĕ А.И. Павлов тата унтах кадрсемпе ĕçлекен ертсе пыракан специалист Н.К. Смирнова хăнасене хапăл тусах йышăнчĕç. Вĕсем студентсене çул çӳрев маршручĕпе паллаштарчĕç, Муркаш районĕ çинчен тата çитсе курма палăртнă хуçалăхсем çинчен хатĕрленĕ буклетсене салатрĕç. Пуçланчĕ урлă пĕрре тухсан пур ĕçне те туса хăвараççĕ-çке. «Çакăн пек агрегатсем кĕр акинче хăйсене уйрăмах лайăх кăтартаççĕ», – тет Ростислав Николаевич.

Малалла çул ĕне фермине илсе çитерчĕ. Кунта выльăх апачĕн рационĕ пирки те, çĕнĕ оборудовани пирки те сăмах пулчĕ. Ĕç укçи мĕнле ĕçлесе пынинчен килнине те, ялта çамрăк специалистсем питĕ кирлĕ пулнине те каларĕ Р.Н. Тимофеев. Студентсем ку хуçалăхра ĕçе лайăх йĕркелесе пынине тӳрех асăрхарĕç. Калаçура кăна мар, çитсе курнă объектсенче тирпейлĕ пулнинче те, техникăна управа тĕрĕс лартнинче те.

Сивĕ çанталăка пăхмасăр çамрăк хĕрсемпе каччăсем «Ударника» çитрĕç. Хуçалăх ертӳçи П.П. Давыдов çамрăксене курма хавас пулнине пытармарĕ. Тӳрех вĕсемпе кĕске калаçу ирттерчĕ. Хуçалăх мĕн ĕçленипе, еплерех пурăннипе паллаштарчĕ.

Сăмах ытларах çĕр улми фермипе паллаштарчĕ. Хăй ертсе пыракан хуçалăхăн ĕçĕхĕлĕ пирки кĕскен каларĕ. Пурнăçа çĕнĕлĕхсем кĕртсех пыраççĕ Ваçкассисем, нацпроектсемпе те ĕçлеççĕ. Игорь Васильевич студентсен ыйтăвĕсем çине хуравланă май, малалла майракаллă шултра выльăхпа тата тимлĕрех Ĕçлеме вара вăйсем пур çамрăксен.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: студенткăсем пробиркăри çĕр улми хунавĕсене сăнаççĕ; пулас инженер А. Алексеев çĕнĕ тракторпа юнашар; И. Никитин агроном çĕр улмин пахалăхĕпе паллаштарать.**

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче

## Уявсем хаваслă иртрĕç

Анчах Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне уявларăмăр. Уявран «Путене» ача сачĕ те юлмарĕ. Пур ушкăнра та тĕрлĕ мероприятисем иртрĕç. Вăтам ушкăнсем вара «Айтăр-ха, аннесем» конкурс ирттерчĕç. Конкурссем хушшинче ачасем аннесем, асаннесем ячĕпе юрăсем юрларĕç, сăвăсем каларĕç.

Уява пур аннесем те активлă хутшăнчĕç. Уйрăмах çак аннесене палăртса хăварас килет: И.Г. Белова, Н.Н. Борисова, С.М. Лукина, Т.В. Максимова тата Т.Н. Пикузова.

Асăннă аннесем тĕрлĕ номинацисен çĕнтерӳçисем пулчĕç.

Маларах çак ушкăнрах аттесен ячĕпе те «Атте, анне тата эпĕ» спорт уявĕ иртнĕччĕ. Уяв пурне те кăмăла кайрĕ. Пурĕ тăватă çемье тупăшрĕç: Лукинсен, Даниловсен, Борисовсен тата Тимофеевсен çемйисем. Хĕрӳ ăмăртура Даниловсен çемйи малти вырăна тухма пултарчĕ.

«Ромашка» вăтам ушкăн ашшĕ-амăшĕсене уява активлă хутшăннăшăн пысăк тав сăмахĕ калас килет.

**С. ИВАНОВА,**
**вăтам ушкăн воспитателĕ.**



Пирĕн пата çыраççĕ

# Кĕтрĕç, кĕтрĕç – кĕтсе илеймерĕç

Пурнăçра тĕрлĕрен кĕнчеле, теççĕ халăхра. Çынсем те тĕрлĕрен пулаççĕ тесшĕн эпĕ хам енчен. Пĕрисем таçта ĕçлесен те хăйсен ĕçри тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ, чыс-хисеп çĕнсе илеççĕ. Теприсем талпас çапсах вăхăта ирттереççĕ, ĕçлессе те ячĕшĕн кăна ĕçленçи тăваççĕ. Укçине вара ĕçлемесен те ыттисенчен кая илес килмест.

Мĕншĕн çыратăп-ха эпĕ çапла?! Районта çулсеренех палăртнă график тăрăх художество пултарулăх ушкăнĕсен смотр-конкурсĕсем иртеççĕ. Графикне, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов алă пусса çирĕплетет.

Февралĕн 28-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче те виçĕ ушкăн хăйсен пултарулăхне куракансем тата жюри членĕсем умĕнче кăтартмаллаччĕ: «Муркаш» халăх фольклор ушкăнĕ, Çурлатринчи «Çеçпĕл» эстрада ансамблĕ тата «Расна» халăх эстрада ушкăнĕ.

Икĕ ушкăнĕ куракансене юрри-ташшисемпе чăнласах тыткăнларĕç. Смотр-концерт пуласси пирки пĕлтерӳсене маларах çакса хуни те витĕм кӳчĕ пулас, куракансем йышлă пулчĕç залра.

Çав каç «Расна» халăх эстрада ансамблĕ сцена çине тухманни кăна курма пыракансене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ.

Районти пултарулăх ушкăнне çӳрекенсенчен нихăшĕ те пĕр пус та укçа илмест конкурссенче юрланăшăн, ташланăшăн. Кунĕпе ĕшеннĕ хыççăн чун туртнипе, юрра-ташша кăмăлланипе клубсене пуçтарăнаççĕ. Районти ĕç çыннисене хăйсен пултарулăхĕпе савăнтараççĕ.

«Расна» эстрада ушкăнĕнче юрлакансем вара – уйăхсерен ĕç укçи илсе тăракан культура ĕçченĕсем! Нивушлĕ вĕсене ытти пултарулăх ушкăнĕсем умĕнче нимĕн чухлĕ те намăс мар! Кунта районти культура пайĕн ĕçченĕсен шутламалли пурах!

Çакна та палăртса хăварас килет: Культура çурчĕн директорĕ В.Васильева смотр-концерт пуçланас умĕн мĕнле ушкăнсем сцена çинче хăйсен пултарулăхне кăтартассине куракансене пĕлтерчĕ, жюри членĕсене вĕсем валли хатĕрленĕ сĕтел хушшине ятран каласах ларма ыйтрĕ. Анчах темшĕн жюри членĕсем сĕтел хушшине ларма васкамарĕç. Район пуçлăхĕ Ю. Иванов çакна курсан, хăй вĕсене сĕтел хушшине ларма ыйтрĕ. Ю.Жуков композиторсăр пуçне сĕтел хушшине никам та вырнаçса лармарĕ. Çакăн пек хăтланса ытти жюри членĕсем хăйсен культура шайĕ пĕчĕк пулнине кăтартрĕç, пултарулăх ушкăнĕсене хисеплеменни те куç кĕретех.

Малашне те кун пекех пулсан, районти культура шайĕ ăçтан çӳле çĕкленĕ-ха?! Тата çӳлерех асăннă икĕ ушкăнĕ те яваплăха «Расна» ушкăн пек туймасăр тăнă пулсан мĕн пулĕччĕ-ши?! Культура çуртне пухăннă халăхăн вăхăчĕ усăсăр иртетчĕ вĕт!

Пултарулăх шайĕ вĕсен çулсеренех ӳссе пытăр! Таймапуç вĕсене яваплăха туйса тимленĕшĕн.

**Курма пыракансем ыйтнипе**
**И. МАЙКОВ.**

Ветерансен ыйтăвĕсемпе

# Тен, депутат пулăшĕ?

Иртнĕ 2007 çулта ветерансемпе инвалидсем хушшинче чылай сăмах çӳрерĕ. Автобус çинче билетпа çӳрессине пĕтереççĕ терĕç. Эпĕ хам та ĕненмерĕм ку сăмахсене, лайăх япалана мĕнле тĕп тумалла?

Сăмах ахаль тухмасть тени чăнахах иккен. 2008 çултан пуçласа чиновниксем тăрăшнипе автобус маршручĕ Шупашкара 50 çухрăм ытла тесе ĕçпе вăрçă ветеранĕсене, инвалидсене льготнăй билет çур хакне тӳлесе илмелле туса хучĕç. Ку вара инвалидсемпе ветерансенчен мăшкăллани, вĕсене хисеплеменнине пĕлтерчĕ. Вĕсене, çĕршыв малалла аталантăр тесе хăй вăхăтĕнче вăйне шеллемесĕр ĕçленĕскерсене, масар çине пытарни пекех пулса тухрĕ. Чылайăшĕ паянхи кун та ĕçлет.

Мĕнле ăнланмалла? Чăваш Ен Президенчĕ Н.В. Федоров 2008 çула Ырă ĕçсен çулĕ тесе пĕлтерчĕ. Тен Чăвашавтотранс начальникĕ урăхла ăнланать çакна? Хăш-пĕр ветерансем каланă тăрăх (Муркаш пасарĕнче темĕн те илтме пулать, калаçма ан ӳркен) ку ыйтупа вĕсем районти яваплă çынсемпе калаçнă. Ыйту вара паянхи кун та вырăнтан тапранман. Вĕсем пурте ĕçлĕ çынсем, вăхăчĕ те çук пулĕ. Вăхăт çитсен вĕсем те ватăлĕç. Нивушлĕ ветарансем суйлава кайма анчах кирлĕ?

Пирĕн районта ветерансен организацийĕ, политика партийĕсен вырăнти ертӳçисем пур («Единая Россия», ЛДПР, КПРФ, «Справедливая Россия»). Вĕсем те паянхи кун çак ыйтăва хускатмаççĕ. Суйлав умĕн ĕçлесе ывăннă пулĕ. Вĕсене те шеллемелле, питĕ йывăр ĕç вĕсен, суйлавçăсене мĕн кăна шантарса каламарĕç, тĕрлĕрен агитаци материалĕсене салатрĕç.

Çавăнпа та ветерансем ыйтнипе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатĕнчен В.Г. Даниловран хаçат урлă пулăшу ыйтма шутларăм. Вăл çак ыйтăва татса парасса шанасах килет.

Çак категорири çынсем валли Шупашкар-Муркаш-Шупашкар рейс уçассине пурнăçа кĕртмелле, кунне 4 рейсран кая мар е Шупашкартан Муркаш урлă каякан автобуссем çине Муркаша çитиччченех тата каялла хулана каякан автобуссемпе льготнăй билетпа тӳлевсĕр çӳрессине татса памалла, çул тăршшĕ 45-47 çухрăм.

Çакна каласа хăварас килет. Шупашкар-Кашмаш 588-мĕш маршрута 2007 çулта уçнăччĕ. Кашмаш ял çыннисем питĕ савăннăччĕ. Мĕншĕн тесен ĕçлекенсем те, шкулта вĕренекенсем те чылай, 40-50 çынна çитет. Çак маршрут вара 2008 çулпа, Ырă ĕçсен çулĕнче, питĕ япăх çӳрет, январь-февраль уйăхĕсенче çӳремен тесен те юрать. Кама уншăн явап тыттармалла?

Çав вăхăтрах питĕ лайăх тĕслĕх. Пирĕн ял тăрăх ирпе, кăнтăрла иртсен Шурча-Муркаш-Шурча маршрутпа автобус çӳрет. Вăл вара маршрута уçнăранпах хăйĕн вăхăтне пăхănса çула тухать. Водителĕ те питĕ кăмăллă.

Çакăнта лартнă ыйтусене пурнăçа кĕртессе шанасах килет, сăмахпа анчах мар, ĕçпе те, 2008 çул чăнахах та Ырă ĕçсен çулĕ пултăрччĕ.

**Л. ЯРИКОВ,**
**çар вăйĕсен ветеранĕ.**

Кашмаш ялĕ.

Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Никама та кичем мар пирĕн патра

2006 çул, Ача çулталăкĕ, хыçа юлчĕ. 2007 çул Атапайри Культура центрĕшĕн ăнăçлă иртрĕ. 2008 çул – Ырă ĕçсен çулталăкĕ тата Çемье çулĕ. Çакна шута илсе Атапайри Культура центрĕнче Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков, специалисчĕ С.А. Михайлова тата Атапай шкул директорĕ Т.Б. Вязова пулăшса пынипе нумай интереслĕ мероприятисем туса ирттереççĕ. Çулталăк пуçламăшĕнчех ял халăхĕ хавас, тулли кăмăлпа Çĕнĕ çул уявне кĕтсе илчĕ. Çĕнĕ çула çĕнĕлĕхсемпе, интереслĕ конкурссемпе, тулли хавас кăмăлпа ирттермешкĕн «Оринино» хуçалăх спонсор пулса пулăшрĕ.

Çĕнĕ çул уявĕ хыççăн Сурхури те инçех мар. Çак уява та çамрăксем интереслĕ ирттерчĕç. Асатте-асаннесем юмăç янă вăхăтсене аса илчĕç. Ыт-тĕкел вăйăна кăмăлларĕç. Уяв илемне кĕртсе Ю.Г. Скворцов спонсор пулса 1 хутаç măйăрпа хăналарĕ. Кăшальня уявне те манăçа хăвармарĕç.

Январĕн 25-мĕшĕнче Татьяна кунне паллă турĕç. Конкурса икĕ команда хутшăнчĕ.

Ялти художество пултарулăх ушкăнĕ районта йĕркеленĕ смотр-конкурса та хутшăнчĕ.

Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа ирттерекен оборонăпа массăллă тата спорт уйăхлăхĕн кунĕсенче тĕрлĕрен мероприяти йĕркеленĕ. Тăван çĕршыв вăл – атте-анне килĕ, тăван ял, юратнă шкул. Кăçалхи çул Çемье çулĕ пулнине шута илсе Атапайри Культура центрĕн çуртĕнче январĕн 24-мĕшĕнче «Çемье çулĕ – 2008» ятпа мероприяти иртрĕ. 6 çемье тĕрлĕрен конкурс-вăйăсенче, ăмăртусенче вăй виçрĕ.

Тăван çĕршыв вăл – юратнă шкул. Çакна тĕпе хурса Атапай шкулĕнче тĕрлĕрен çулсенче вĕренсе тухнă выпускниксемпе февралĕн 9-мĕшĕнче тĕл пулу каçĕ иртрĕ. Тăван шкула юратса тĕл пулăва хăнасем нумаййăн килчĕç, асăнмалăх парнесем парса хăварчĕç, сăмах тухса каларĕç. Аса илӳсем, конкурссем пулчĕç.

Февральтех Çеменкасси ялĕнче «Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн» девизпа ирттернĕ спорт уявне ял халăхĕ пысăка хурса хакларĕ.

Февралĕн 22-мĕшĕнче ирттернĕ «Пăхаттирсен çулталăкĕ – 2008» конкурс пулса иртрĕ. Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунне халалласа кире пуканĕ çĕклессипе спорт мастерĕ М.Н. Музыков, Ю.М. Ковалев парнисене çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвне ирттернĕ.

Тăван çĕршыв вăл – тăван тавралăх, тăван халăх. Кашни çыннăн хăйĕн тăван халăх пурнăçне, историне, культурине, ĕç-хĕлне, паттăр ывăл-хĕрне аван пĕлсе тăмалла. Ăруран ăрăва куçса пымалла. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.И. Вязов пуçарăвĕпе «Атапай тăрăхĕсем» ятлă кĕнеке кăларма планларĕç. Хальхи вăхăтра материал пухас тапхăр пырать. Атапай тăрăхĕнчи çынсем пирки аса илӳсене, ĕлĕкхи сăн ӳкерчĕксене, пултаруллă çынсем çинчен çырнă тата ытти материалсене Атапай библиотекине е шкула килсе пама ыйтрĕç.

Мероприятие ертсе пыракансем кашни конкурса интереслĕ ирттерме тăрăшнипе пирĕн Культура центрĕнче кичем мар. Культура ĕçне аталантармашкăн, çĕнĕлĕхсемпе усă курса ĕçлесе пымашкăн спонсорсене пурне те пысăк тав сăмахĕ каласа хăварас килет. Çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**И. СКВОРЦОВА,**
**Оринин шкулĕн учителĕ.**

Ĕненекенсем валли

## Аслă типĕ пуçланчĕ

Хаваслă Çăварни эрни вĕçленчĕ. Тунти кунран Аслă типĕ пуçланчĕ. Вăл 7 эрнене пырать. Апрелĕн 27-мĕшĕнче Мăнкунра вĕçленет.

Турра ĕненекенсем Аслă типĕре хăйсене çирĕп алăра тытма тăрăшаççĕ. Апат-çимĕç пирки мар, ытларах чун пирки шутлаççĕ.